МБДОУ «Новочурашевский детский сад «Колосок»
Ибресинского района Чувашской Республики

# Чăваш чĕлхи - тăван чĕлхе

(Чăваш чĕлхи кунĕ ячĕпе хатĕрленĕ уяв сценарийĕ)

Выполнила Орлова Т.Н.
музыкальный руководитель

с. Новое Чурашево
2018 г

**Чăваш чĕлхи - тăван чĕлхе**

(Чăваш чĕлхи кунĕ ячĕпе хатĕрленĕ уяв  сценарийĕ)

***Уяв тĕллевĕ:*** ачасене халăх традицийĕсене упрама, тăван чĕлхене юратса вĕренме хавхалантарасси,  чĕлхе илемĕпе пуянлăхне туйма, пĕлӳлĕхе ӳстерме пулăшасси.

***(ачасем зала кĕвве май кĕрсе тăраçĕ. те ЧР гимн юрлама пуçлаççĕ)***

**1 ертсе пыракан**

**2 ертсе пыракан**

**1 ертсе пыракан**: Ырă кун пултăр, туссем, тăвансем, ытарайми чăваш çыннисем! Паян пысăк уяв - чăваш чĕлхи кунĕ. Чăваш чĕлхи пуян та илемлĕ, янăравлă та çепĕç, паха та асамлă. Вăл чăваш юрри пек янăравлă та кĕвĕллĕ, унпа чуна ачашлама е амантма, çĕклеме е ӳкерме, хавхалантарма пулать

**2 ертсе пыракан**: Атте-анне чĕлхи - пирĕн тăван чĕлхе. Тăван сăмах, тăван чĕлхе - халăх чунĕ. Унăн паянхи кунĕ, малашлăхĕ. Унсăрăн халăх çук.

**1 ертсе пыракан:**

Камсем эпир? Мĕнле йăхран эпир?

Мĕнле анне пире савса çуратнă?

Мĕнле атте ура çине тăратнă?

Мĕнле çĕр парнеленĕ хăйĕн çăкăрне?

**2 ертсе пыракан**:

Чăвашсемех эпир, ырă çынсем эпир.

Чăваш анне пире савса çуратнă.

Чăваш атте ура çине тăратнă.

Чăваш çĕрĕ парнеленĕ хăйĕн çăкăрне. ***(В.Станьял)***

(Çăкăр тăварпа тухмалла: саламламалла)

***(ачасем кĕвве май залран тухса кайса пыраççĕ: чи кĕçĕн ушкăн уява пуçлать)***

**1. Юрă «Алли кирлĕ мĕн тума»**

**2. Вăйă «Ăçта пирĕн аллисем»**

**3. Сăвă**

**4. Параппан**

**5. Ташă**

**(*чи кĕçĕн ушкăнри ачасем тухса каяççĕ: кĕçĕн ушкăнри ачасем кĕрсе уява малалла тăсаççĕ*)**

**1. Юрă «Выляма чăнни»**
**2. Вăйă «Çӳрет Ванюк»**
**3. Юрă «Путене»**
**4. Сăвă**
**5. Частушки**
**6. Ташă**

***(кĕçĕн ушкăнри ачасем тухса каяççĕ: вăтам ушкăнри ачасем кĕрсе уява малалла тăсаççĕ)***

***1. Юрă «Улми лайăх и: çеçки лайăх-и»***
***2. Такмаксем «Тухха Ванюк пирĕн умма»***
***3. Вăйăсем***
***4. Юрă «Ваçка кушак»***
***5. Сăвă***
***5. Ташă***

***(вăтам ушкăнри ачасем тухса каяççĕ: аслă ушкăнри ачасем кĕрсе уява малалла тăсаççĕ)***

**1 ертсе пыракан**: Паян, апрелĕн 25-мĕшĕнче, пĕтĕм Чăваш çĕршывĕ чăваш чĕлхи кунне уявлать. Эпир 1993-мĕш çултан пуçласа кашни çул Чăваш наци кунне уявлатпăр.Ăна ахальтен мар ака уйăхĕн 25-мĕшĕнче иртттерме палăртнă. Çак кун чăваш çырулăхне йĕркелекенĕ И.Я. Яковлев çуралнă. Уява хамăр республикăра кăна мар, аякра пурăнакан чăвашсем те чысласа хатĕрленеççĕ. Мĕнле савăнмăн –ха çакăншăн!

**СĂВĂ**
Тавтапуç Яковлева-
Çутта кăларчĕ чăваша.
Вулама-çырма пĕлме,
Майне туса вăл пачĕ.

Алфавит вăл йĕркелерĕ,
Пичетлерĕ букварьне,
Халалне çырса хăварчĕ
Туслă пурăнма чĕнсе.

Чăваш шкулĕсем вăл уçрĕ
Маттур ачасем валли.
Тарăн йĕр ăшра хăварчĕ -
Асра юлчĕ ĕмĕре.

Чăваш халăхĕ манмарĕ
Аслă Вĕрентекенне.

Ун ячĕпеле чысларĕ
Проспектпа бульварсене.

Тавтапуç Яковлева-
Çутта кăларчĕ чăваша.
Мускавра та, Раççейре те
Пĕлеççĕ халь чăваша!

***(Алексеева О.И вѐрентекен)***

***2–мĕш ертсе пыракан:*** Пурнăçра – пĕр анне. Тăван чĕлхе те пĕрре. Ăна упрасси – пирĕн тивĕç. Иван Яковлевич Яковлев пуласлăх çыннисене тăван чĕлхене упрама пиллесе хăварнă. Çапла çеç чăваш чĕлхи ыттисенчен кая пулмĕ тенĕ вăл. «Чĕлхе чечекленесси пĕтĕмпех сиртен килет», - ак мĕнле пархатарлă шухăшĕ вĕрентекенĕмĕрĕн.

Кам тăван чĕлхене юратмасть,
Вăл тăван амăшне юратмасть.
Кам тăван амăшне юратмасть,
Вăл тăван халăхне юратмасть.
Кам тăван халăхне юратмасть,
Вăл тăван çĕр-шывне юратмасть

**(1 ача)**
Эп - чăваш ачи, саватăп
Чĕвĕл-чĕвĕл чĕлхене.
Юратап сăвва-юрра та,
Купăса та кĕслене.
Юрататăп вуламашкăн
Чăвашла та вырăсла.
Ик чĕлхе вăл - ик ăс маншăн,
Эп пуласшăн ик ăслах!

***(Петĕр  Хусанкай***

**(2 ача)**
Мухтанап чăваш пулнишĕн,
Чăвашах пулса юлнишĕн,
Çепĕç-çепĕç уç сассишĕн,
Акăш-макăш пур юрришĕн

**Юрă  «Шупашкар»**

**1. ертсе пыракан**: Чăваш чĕлхи – халăхăн ĕмĕр сӳнми ăс-тăн чечекĕ. Чăваш халăхне çутта кăларакан Иван Яковлевич Яковлев хăйĕн халалĕнче çапла çырса хăварнă: «Туссем, тăвансем, ытарайми чăваш çыннисем! Мĕн ĕмĕрĕм тăршшĕпех чунăмпа, чĕремпе çунса пурăнтăм сирĕншĕн. Ан манăр, астуса тăрăр çакна! Эсир хăвăр халăхăрăн чĕлхинчен ютшăнмасан, халăх кăмăлĕ пĕтĕмпех сирĕн аллăрта пулĕ!

**(3 ача)**
Савӑнатӑп эп чӑваш пулнишӗн,
Тӑпӑл-тӑпӑл тӑпӑлкка ташшишӗн,
Асамат кӗперӗ пек тӗрришӗн,
Атӑл шывӗ пек ҫемҫе чӗлхишӗн.
Савӑнатӑп эп чӑваш пулнишӗн.

***(А. Николаева)***

**Юрӑ «Асамат кӗперӗ»**

**(4 ача)**
Ытарайми тӑван чӗлхемӗр,
Сана манмастпӑр ӗмӗрне.
Ҫухатас ҫук атте-аннемӗр
Пире пилленӗ парнене.

**(5 ача)**
Ытарайми тӑван чӗлхемӗр,
Сана манмастпӑр ӗмӗрне.
Ҫухатас ҫук атте-аннемӗр
Пире пилленӗ парнене.

**«Шумовой оркестр»**

**(6 ача)**
Атьӑр ташша пуҫлар-и те
Атьӑр ташша пуҫлар-и?
Ура хуҫса ташлар-и те,
Ура хуҫса ташлар-и?

**«Ҫамрӑк ачасен ташши»**

**(7 ача)**
Ташши, ташши,
салакайӑк ташши
Салакайӑк ташши мар
Хӗр пӗрчисен ташши

**(8 ача)**
Йӗпреҫ енӗ ӗлӗкрен илемлӗ
Чӑн тӳперен илӗртет хӗвелӗ.

Кӗтне шывӗн хумӗсем
Кӗвӗлеççӗ юрăсем

***(Л. Мартьянова)***

**Юрă «Тăван ен»**

**2 ертсе пыракан**

Малалла пирӗн, çитӗнсе пыракан ачасене, Вӗрентекенӗмӗр ӗçне малалла туса пымалла, чăваш чӗлхине юратса вӗренмелле, аталантармалла, тӗпчемелле, упрамалла

Тăван чӗлхе пурри савăнтарать,
Çуралнă вырăна астутарать.
Хăв халăхна хисеп тума хушать,
Çӗр-шывшăн тăрăшма вăй-хал парать.

***(Александр Савельев-Сас)***

Чăвашра вăрман та чăвашла кашлать.
Шăпчăк та юрлать кунта, ав, чăвашла.
Сассăм пин чӗлхеллӗ халăх хушшинче
Янăрать сăпайлăн, уççăн, чăвашла.

**1 ер.пыр:**

Чăвашăмсем!  Сире телей сунатăп,
Ан сивӗнӗр тăван чӗлхемӗртен.
Мансан – чӗлхесӗр янавар пулатпăр.
Чӗлхе пулсан –пӗтместпӗр ӗмӗрте!..

***(Раиса  Сарпи)***

.